27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1944
АВГУСТ
5
ШАМАТКУН
153(6648) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Тырă вырас ĕçĕн хăвăртлăхне татăклăнах ӳстермелле

Малта пыракан колхозсемпе районсем ыраш вырма тухнăранпа эрне ытла иртрĕ ĕнтĕ. Çак вăхăт хушшинче Чурачăк районĕ 6.900 гектар ытла ыраш вырса, плана 40 процент ытла тултарнă. Елчĕк районĕ 6 пин гектар ытла вырнă. Ыраш вырса пĕтерсе авăн çапма тытăннă колхозсем те халĕ ĕнтĕ республикăра вуншарăн шутланаççĕ. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, «Осоавиахим», «Пахарь» колхозсем, Чурачăк районĕнчи 13 колхоз, Чкаловски районри «Хĕрлĕ Октябрь» колхоз, Калинино районĕнчи «Новая жизнь» колхоз, Элĕк районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз тата ытти вуншар колхозсем ыраш вырса пуçтарас ĕçе ăнăçлăн вĕçлерĕç. Вĕсем халĕ кĕлте кӳрсе ыраша капана хываççĕ, авăн çапаççĕ тата государствăна тырă леçеççĕ. Чылайĕшĕ вĕсем çуртыррисене вырма та тытăнчĕç.

Çак колхозсен ĕçри ăнăçăвĕ мĕнрен килнĕ-ха, мĕнле майпа вĕсем ыраш вырас ĕçе çакăн пек хăвăрт туса ирттерме пултарчĕç?

Малта пыракан çак колхозсен опычĕ, чи малтан, акă мĕне вĕрентет: тырă «симĕс-ха» тесе, вăл талккишĕпех пулса çитессе кĕтсе лармалла мар, пулса çитнĕ участоксене çийĕнчех суйласа вырса пымалла. Çапла туни, пĕр енчен, тырра вăхăтра пуçтарса илме май парать, тепĕр енчен, тырă тăкăнса пĕтес хăрушлăха сирет. Анчах ку вăл — ĕçĕн пуçламăшĕ çеç-ха. Тырра хăвăртрах вырса пуçтарас тесе, малта пыракан колхозсем пĕтĕм ĕçлеме пултаракан колхозниксемпе колхозницăсене çав ĕçе мобилизациленĕ, тырă вырас ĕçе пĕлсе организациленĕ: вĕсен кашни колхозник ыран мĕн тумаллине тата мĕн чухлĕ ĕçлемеллине пĕлсе тăрать: кашни колхозник уйрăм участокра сдельщина тăрăх ĕçлет; колхозникăн ĕç вăхăчĕ хĕвел тухиччен пуçланать те тĕттĕм пулсан тин вĕçленет; колхозниксем туллин, урăх ĕçпе вăхăта сая ямасăр ĕçлеме пултарччăр тесе, пĕчĕк ачасем колхозницăсене ĕçлеме ан чăрмантарччăр тесе, малта пыракан колхозсем столовăй, ача ясли е площадки уçнă; тырă вырас ĕçĕн пахалăхне ятарласа уйăрнă пахалăх инспекторĕсем тĕрĕслесе тăраççĕ; тырă выракан колхозниксем, звеносем, бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлессине организациленĕ; тырă вырнă çĕрте агитаци ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Ĕçе çакăн пек организацилени тырă вырас хăвăртлăха, паллах, нумай ӳстерет.

Çапах та, малта пыракан колхозсем çакна та манмаççĕ: колхозниксем питĕ тăрăшса ĕçлеме пултараççĕ, вĕсем пурте ĕçе тухма тата иртен пуçласа каçченех ĕçлеме пултараççĕ, анчах вĕсем асаттесен йăлипе пур ĕçе те алăпах тума тăрăшаççĕ пулсан, колхозăн мĕнпур пек машинине ĕçе яма тăрăшмаççĕ пулсан, — уп пек чухне тырă вырас ĕç пурпĕрех вăраха каять тата пысăк тăкаксем патне илсе пырать. Халĕ, Отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра, пирĕн колхозсенче ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ çителĕксĕр. Вĕсем çитменнине чылай чухне машинăсем витмелле. Çавăнпа та малта пыракан колхозсем жнейкăсене, лобогрейкăсене кунне 14 сехетрен кая мар ĕçлетереççĕ.

Сăмахран каласан, мĕншĕн-ха Элĕк районĕнчи колхозсенче тырă вырас ĕç питĕ хуллен, юлхавлăн пуçланать? Чи малтанах, кунта тырă «пиçсе çитмен» пирки йăна вырма тухас ĕçе кая хăварса пычĕç, унтан вара ыраш вырма тухрĕç те, авалхи йăлапа алăпах ĕлкĕртме шут тытрĕç. Район августăн 3-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 1.500 гектара яхăн ыраш вырнă, çав шутран мĕнпурĕ те 90 гектарне çеç машинăсемпе вырнă. Çакăн хыççăн районра тырă вырас ĕç юлса пынинчен тĕлĕнмелли пур-и-ха ĕнтĕ? Кунта тĕлĕнмелли нимĕн те çук, колхозсен руководителĕсемпе район руководителĕсем çак питех те паллă чăнлăха манса кайни çеç тĕлĕнтерме пултарать. Акă, Калинино районĕ Элĕк районĕпе юнашарах пурăнать. Вĕсен ĕнтĕ çĕрĕсем те, çанталăкĕ те, ĕç условийĕсем те пĕр пекех темелле. Апла пулин те Калинино районĕ августăн 1-мĕшĕ тĕлнех виçĕ пин гектар ытла, тепĕр майлă каласан, Элĕк районĕнчен ултă хут нумайрах ыраш вырса пуçтарнă. Вĕсем «тырă симĕс» тесе ларман, тырă вырма лайăх хатĕрленсе организованно тытăннă, тырă вырас ĕçе пур майпа та васкатма тăрăшнă, машинăсемпе туллин усă курма кирлине яланах асра тытнă. Çапла вара тырпул пухас ĕçре малта пыракансен ретне тăнă. Тӳрех каламалла: кӳршĕсем мĕнле ĕçленине сăнаса вĕренни элĕксемшĕн питех те усăллă пулнă пулĕччĕ!

Çакнах калас пулать юлса пыракан Ишлей, Сĕнтĕр, Муркаш, Первомайски районсем пирки те.

Тырпул пухса кĕртес ĕçĕн ăнăçлăхне кашни кун, кашни сехет татса парать. Халĕ ĕнтĕ текех тăхтаса тăма вăхăт çук. Халĕ кашни колхозрах хĕрӳ ĕç вĕресе тăмалла, ĕçлеме пултаракан кашни колхозникпа колхозница тырă вырнă çĕрте пулмалла. Тырă вырса пуçтарасси чăннипех те пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăтăр, — çапла кăтартса пачĕç партипе правительство. Партипе совет тата комсомол организацисен хăйсен пĕтĕм ĕçне хальхи тĕп задачăна — тырпулсене хăвăрт, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес задачăна пăхăнтармалла. Хальхи вăхăт — тĕрлĕ пухусемпе канашлусенче шавласа лармалли вăхăт мар, халĕ колхозсене конкретнăй сĕнӳсемпе, кашни уйрăм ĕçе мĕнле тумаллине вĕрентнипе, тимлĕн те ĕçлĕн пулăшмалла. Çак пулăшăва кая юлса пыракан колхозсем уйрăмăнах кĕтеççĕ.

Июлĕн 29-мĕшĕнче эпир Вăрнар районĕнчи колхозсемпе хатĕрлев организацийĕсен руководителĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе хатĕрлев организацийĕсен работникĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене чĕнсе каланине пичетлесе калартăмăр. Пирĕн республикăри малта пыракан Хĕрлĕ ялавлă районри ĕççыннисем çапла чĕнсе каларĕç:

«Юлташсем, колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе хатĕрлев организацийĕсен работникĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем, эпир сире социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнетпĕр, тырпул пухса кĕртес тата кĕрхи тырăсем акас ĕçсене ăнăçлăн пурнăçлани çинчен, тырпул хатĕрлемелли плана срокчен тултарни çинчен аслă Сталина пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн анлă кĕрешӳ пуçласа яма чĕнетпĕр.

Хамăрăн çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе вăйлатассишĕн ялхуçалăхĕнчи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн ялавне татах та çӳлерех çĕклер!»

Вăрнарсен çак чĕнĕвне кашни колхозникпа ялхуçалăх работникĕ патне çитерсен, тырпул пухса кĕртес ĕçре социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырсан, уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин усă курса ĕçлесен, эпир тырпулсене хăвăрт пухса кĕме пултаратпăр тата пултармалла та.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем РЕЗЕКНЕ (Режица) хулинчен хĕвеланăçнерехре, тăшманпа çапăçса, малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — БУЗАНЫ, БАРКАВА, АЙСПУРЕС, БАУРИ, ДАБАРИ ятлă пысăк ялсем тата АТАШЕНИ ятлă чугун çул станцийĕ.

КАУНАС (Ковно) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 200 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — ПЕРНАРОВО, ПЕЛУТОВО, ДОГИ, МАНТИГАЙЛЯ, ЛЕБЕДЗЕ, БИЛЮНЦЫ, БЕРНАТОВИЧЕ, САПЕЖИШКИ, РОГЛИШКИ, СУТКИ, ЛУКШЕ, ГРИШКА БУДА, БАРЗДЫ, ЖЕРДЕЛЕ, ВИЛЬТРАКИ, СТЕРКИ ятлă пысăк ялсем.

САНДОМИР хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ВИСЛА шывĕ урлă каçнă та, унăн сулахай хĕррипче 25 километр шалалла кĕрсе фронт сарлакăшпе 30 километр таран плацдарм туртса илнĕ, çавăнпа пĕрлех халăх пурăнакан 50 пункта йышăннă. Вăл шутра — СТАШУВ хули, КОПШИВНИЦА, ПОЛАНЕЦ ятлă пысăк ялсем.

ЯРОСЛАВ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, САНОК хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ГУТА-КОМАРОВСКА, ДОЛЬНЫ, НИВИСКА, ДОМАТКУВ, БРАТКОВИЦА, ДОМБРОВА, ГУРНА, ШУФНАРОВА, ВИСНЕВА, ОДЖИКОНЬ, ЯБЛОНИЦА ПОЛЬСКА, БЖОЗУВ, РАЧКОВА ятлă пысăк ялсем тата СВИЛЬЧА, САНОК чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 76 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 81 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Резекне (Режица) хулинчен хĕвеланăçнерехре пĕр соединени боецĕсем, тăшманпа çапăçса, Тейция тата Лысина шывĕсем урлă каçнă.

Нимĕçсем Вараклани тата Мадина хулисем хушшинчи шоссе çулĕ çинче çирĕпленсе ларнă та совет чаçĕсем малалла хĕссе пынине чарма хăтланнă. Пирĕн подразделенисем тăшманăн хирĕç тăмалли узелне аякри вăрман витĕр тухса çавăрса илнĕ те, фронтран тата тылран пыра-пыра çапса, шоссе çулĕн самаях пысăк участокне нимĕçсенчен тасатнă. Тăшмана йывăр çухатусем кӳнĕ. Пĕр çӳллĕ вырăнта кăна гитлеровецсен 400 виллине çити шута илнĕ. Пирĕн тепĕр соединени чаçĕсем Аташа шывĕ урлă каçнă та Резекне хулипе Крустпилс хули хушшинчи чугун çул çине тухнă. Пирĕн çарсем 2 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 3 тупă, 23 хир туппи, 89 пулемет, 10 радиостанци, 6 склад тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. 400 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Каунас (Ковно) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 200 пункта ытла туртса илнĕ. Пĕр пĕчĕк участокра тăшман хăйĕн пехотин самаях пысăк вăйĕсене пухнă та кун каçиччен темиçе контратака тунă. Кирек мĕн пулсан та çитĕнӳ тума хăтланса, гитлеровецсем нимĕн пăхса тăмасăр çаплах малалла талпăнса пынă. Артиллерирен тата миномёстемпе пулеметсенчен персе, тăшманăн пур контратакисене те сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен пĕр пине çити вилли выртса юлнă.

Каунас хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман вăйлăн персе тăнине çĕнтерсе, малалла куçса пынă. Вăрманлă пĕр пысăк вырăна нимĕçсенчен тасатнă. Совет чаçĕсем, çав тери хăвăрттăн пыра-пыра çапса, тăшманăн Сутки, Лукше тата Гришка-Буда ятлă тĕреклетнĕ пункчĕсене туртса илнĕ. Нимĕçсен 17 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 13 туппине, 7 бронемашина тата 2 чугун çул эшелонне пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 2.400 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсенчен 33 тупă, 17 миномет, 74 пулемет, 50 автомашина, боеприпассемпе çар пурлăхĕн 15 складне туртса илнĕ. Тăшман, сывлăшран пыра-пыра çапса, пирĕн наступлени туса пыракан çарсене чарса тăма хăтланнă, çавăнпа вăл кунти çапăçусене авиацин пысăк вăйĕсене кĕртсе янă. Совет летчикĕ-истребителĕсем хамăрăн тип çĕр çинче кĕрешекен чаçсене шанчăклăн хӳтĕлесе тăнă. Сывлăшри çапăçусенче кун каçиччен нимĕçсен 47 самолетне персе ӳкернĕ. Кунсăр пуçне, тăшманăн пĕр аэродромĕ çинче нимĕçсен чылай самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сандомир хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Висла шывĕ урлă каçнă. Ал айĕнчи япаласенчен каçăсем туса, Висла шывĕ урлă чи малтан совет пехотинецĕсем каçса кайнă. Унтан вара, понтонсемпе сулăсем çине тиесе, танксене каçарма пуçланă. Дамбăпа усă курса, нимĕçсем кунта оборонăра тăма вăйлă укреплени туса лартнă. Тăшман пирĕн çарсене Висла шывĕн хĕвелтухăç енне сирсе ывăтма мĕн вăй çитнĕ таран тăрăшать. Анчах совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе, нимĕçсем, пĕр позици хыççăн тепĕр позицие пăраха-пăраха хăварса, каялла чакаççĕ. Пирĕн çарсем Висла шывĕн сулахай енче халăх пурăнакан 50 пункта, вăл шутра Сташув хулине туртса илнĕ. Хаяр çапăçусенче кун каçиччен 3.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Вăл шутра — 8 танк тата тĕрлĕ калибрлă 60 тупă. 300 нимĕçе тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕрте нимĕçсен 12 бомбардировщикĕ, 14 истребитель хӳтĕлесе пынипе, пирĕн пĕр чугун çул станцине тапăнма хăтланнă. Советсен 6 истребителĕ хăюллăн атакăласа, тăшман самолечĕсен çапăçури ретне пăснă та, вара нимĕç бомбардировщикĕсен ирĕксĕрех хăйсен бомбисене вăрман çине пăрахмалла пулнă. Çакăнти сывлăшри çапăçура Карамышев лейтенант тăшманăн пĕр бомбардировщикне тата тепĕр истребительне персе ӳкернĕ. Крупин, Кацер тата Прохоров летчиксем кашни пĕрер нимĕç истребительне персе ӳкернĕ. Вара тăшманăн ытти самолечĕсем çапăçуран хăвăрт тухса тарнă. Пирĕн летчиксем хăйсен базине пĕр çухатусăр каялла таврăннă.

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Нарва заливĕпе Чудь кӳллинче тăшманăн пĕр катерне тата 4 тральщикне шыва путарнă.

* * *

Пирĕн çарсем Шернер генерал-полковникăн приказне тытса илнĕ. Шернер генерал-полковника нумаях пулмасть нимĕç çарĕсен çурçĕрти группин командующийĕ пулма лартнă. Вăл хăйĕн приказĕнче çапла каланă: «Фюрер мана йывăр сехетре нимĕç çарĕсен çурçĕрти группин командующийĕ пулма лартрĕ, Балтика тăрăхне хӳтĕлеме пур майсемпе те усă курма хушрĕ», тенĕ. Унтан çав командующи, хăйĕн салтакĕсене хаяр наказанисем парассипе хăратса, çапла калать: «Эпĕ акă сăмах ĕçрен хăраса тăракан, çапăçуран пăрăнса тăракан кашни салтака ярса илĕп», тет. Юлашкинчен çав нимĕç генералĕ хăйĕн офицерĕсене ӳкĕтлесе çапла каланă: «Кашни метр çĕре, кашни участока юлашки сывлăш тухиччен хӳтĕлемелле. Пирĕн кашнин çĕре тымар янă пек çирĕпленсе лармалла. Тăшмана пĕр командăй пункта та, управленин пĕр постне те памалла мар. Нимĕç çарĕсен çурçĕр группин салтакĕсем, эсир хăвăр алăра Германи халăхĕн малашнехи пурнăçне, вăрçă мĕнпе пĕтессине тытса тăратăр», — тенĕ.

Нимĕçсен Шернер генералĕн приказĕ пирĕн çарсем Балтика тăрăхĕнче хупăрласа илнĕ нимĕç çарĕсен çурçĕрти группинче ĕçсем пĕтĕмпех пăсăлса кайнине лайăх кăтартса парать. Нимĕç салтакĕсем, хăйсен пурнăçĕ пĕтес патне çитнине кура, çапăçуран пăрăнаççĕ, тараççĕ. Нимле хаяр приказсем те, нимĕнле тăрăхса ӳкĕтлени те нимĕç çарĕсен çурçĕр группин çĕнĕ командующине Шернер генерала пулăшма пултараймĕç. Вăл хăйĕн çарĕсене çĕре тымар янă пек çирĕпленсе ларма хушать. Анчах та Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче темиçе çĕр пин гитлеровец ĕнтĕ çĕре тымар янă пек çирĕпленсе ларнă кăна мар, çĕрте çĕрсе кайма та ĕлкĕрнĕ. Нимĕç çарĕсен çурçĕр группинчи пур салтаксемпе офицерсене те шăп та шай çак шăпа кĕтсе тăрать ĕнтĕ. Балтика тăрăхĕ нимĕçсемшĕн масар пулса тăрĕ.

Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырса, çĕнтерӳ тырпулне вăхăтра пухса кĕртер!

ÇУРТЫРРИСЕМ ВЫРМА ТЫТĂНЧĔÇ

ЧУРАЧĂК, августăн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Августăн 3-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем 6.919 гектар ыраш вырчĕç. Вăл шутран 880 гектар машинăсемпе вырнă. 13 колхозра ыраш вырса пĕтерсе, çуртыррисем вырма тытăннă. Сăмахран, «Шумашар» колхоз 3 гектар, «Красное Сормово» колхоз 10 гектар ясмăк çулнă.

Авăн çапас, государствăна тырă леçес ĕç те хĕрӳллĕн пырать. «Пучах» тата «Красный флот» колхозсем 10—15 гектар çинчи ыраша çапнă, государствăна 52—60 центнер тырă панă.

Çаксемпе пĕрлех, колхозсем кĕртыррисем акма çĕртме пуссине кăпкалатса çемçетеççĕ, вырăнĕ-вырăнĕпе тепĕр хут сухалаççĕ.

Я. ФЕДОРОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). «Жнейка» колхоз августăн 2-мĕшĕ тĕлне кĕрхи тырăсене вырса пĕтерчĕ. Халĕ колхозниксем çуртырри выраççĕ. Паянхи куна 6 гектар урпа вырнă. Колхозниксен тепĕр пайĕ кĕлтесене капана хывнă тата авăн çапнă çĕрте ĕçлет. Ĕнер колхозниксем 6 лавпа государствăна тырă леçрĕç.

Н. СКВОРЦОВ.

Ĕçлеме пултаракан çынсем пурте уйра

СЕНТЕРВАРРИ, августăн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1942 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче «Хулари тата ялла вырăнсенчи ĕçлеме пултаракан халăха колхозсенче, совхозсенче тата МТС-сенче ялхуçалăх ĕçне тума мобилизацилемелли йĕркесем çинчен» йышăннă постановленире кăтартнă тăрăх, райисполком хулапа ялсенчи ĕçлеме пултаракан çынсене тырпул пухса кĕртнĕ çĕре мобилизацилерĕ. Паянхи куна хулари служащисенчен 47 çын, учительсенчен 48 çын, колхоз ĕçĕпе çыхăнманнисемпе колхозра тăманнисенчен 97 çын, шкул ачисенчен 956 çын уйхир ĕçне хутшăннă. Вăл шутран Макаç ялсоветне кĕрекен колхозсенче 18 çын, Сталин ячĕпе тăракан колхозра 20 çын, «Шортан» колхозра 13 çын, «Красноармеец» колхозра 16 çын ĕçлеççĕ.

Кунсăр пуçне, хуларан 180 çын Вăрмар районне ĕçлеме каяççĕ.

Ф. ИЛЬИН.

Пахчаçă Ермолаев

Йĕпреç районĕнчи «Молния» колхозра Ермолаев юлташ пахча-çимĕç бригадинче 15 çул ĕçлет. Иртнĕ çул пахча-çимĕç сутса колхоз 15.000 тенкĕ ытла тупăш илнĕ.

Кăçал та Ермолаев юлташăн пахчинче çимĕçсем лайăх çитĕнеççĕ. Иртнĕ çул гектартан 400 центнер купăста пухса илнĕ, кăçал вара 500 центнер илме шутлаççĕ. 0,55 гектар çинче помидор çитĕнет, çак лаптăкран Ермолаев бригади 22 центнер помидор пухса илессишĕн. Çавăн пекех çур гектар çине кишĕр акнă, унтан 200 центнер пухса илес тесе тăрăшса ĕçлеççĕ. Пахчара пĕр çумкурăкĕ те çук.

П. КУРАКОВ

Машинăсемпе кирлĕ пек усă курмаççĕ

ИШЛЕЙ, августăн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра малта пыракан «МОПР», «Правда», «Новое Марково», «Красноармеец» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем çак кунсенчех ыраш вырса пĕтереççĕ. Ку колхозсенче ĕç вăйне пĕлсе организациленĕ, ялти ĕçлеме пултаракан çынсене пурне те уборкăна мобилизациленĕ. Сăмахран, «МОПР» колхозра, çурлапа вырнисĕр пуçне, 9 çын çавапа çулаççĕ, икĕ жнейка ĕçлет. Машинист А. Петров кунсерен 4 гектар вырас вырăнне 5,5 гектар вырать. «Правда» колхозра жнейка çук. Анчах кунта кунсеренех 20 çын çавапа çулаççĕ. Вĕсем пурте лайăх çулма пĕлекен çынсем, çавăнпа вĕсен ĕçĕ типтерлĕ те хăвăрт пулса пырать.

Анчах та районра кун пек лайăх ĕçлекен колхозсем сахал-ха. Пĕтĕмĕшпе илсен, тырпул пухса кĕртес ĕç вăрахăн пулса пырать. Мĕншĕн тесен, хăшпĕр колхозсем паянхи куна çитсе те ыраш пиçсе çитессе кĕтеççĕ. Сăмахран, Анат-Кĕнер ялсоветĕнчи колхозсенех илер. «11 лет Чувашии» колхоз пурĕ те 2,5 гектар, «Прожектор» колхоз 7 гектар çеç вырнă. «Прожектор» колхозра 86 çын вырма тухас вырăнне 30 çын çеç тухать. Ялсовечĕпе илсен, мĕнпур вырмалли лаптăкран 2,5 процент çеç вырнă. Ялсовет председателĕ Данилова, çавăн пекех комсомолăн пуçламăш организацийĕ те (секретарĕ Ефимов) колхозниксем тырă вырма васкаманнипе килĕшсе лараççĕ.

Çавăн пекех Чурачăк ялсоветĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозра та (председателĕ Хлебников) 29 гектар çеç вырнă. Кунта 2 жнейка тата çавасем те пур. Анчах вĕсемпе усă курмаççĕ. Машинăпа вырма чăрмантаракан çынсемпе кĕрешмеççĕ. Ревизи комисси председателĕ Сорокин колхозниксене машинăпа вырма чарса тăнă. Вăл: «Машинăпа вырма тухсан пĕтĕм халăхне уйран хăваласа кĕретĕп, колхоз председательне суда паратăп», тесе хăратнă.

Çавăн пекех Чантăр, Катраç ялсовечĕсенчи колхозсенче те машинăсемпе ĕçре кирлĕ пек усă курмаççĕ.

Ĕçри çав çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерес тĕлĕшпе партипе совет тата комсомол организацийĕсен тимлĕн ĕçлемелле.

Счетовод пĕлет пулĕ...

СЕНТЕР, августăн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановление кашни колхозрах сӳтсе-явмалла. Анчах Сĕнтĕр районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра çав постановление халиччен те сӳтсе-явман-ха. Колхозниксем постановлени çинчен пĕлмеççĕ. Унтан та ытларах, колхоз председателĕ С. Никифоров ăна хăй те вуласа тухман. «Эпĕ пĕлместĕп, счетовод пĕлет пулĕ», тет вăл. Никифоров колхоз председателĕсен районри канашлăвĕнче те пулман.

Колхоз тырпулсене пухса кĕртме ĕç планĕ тунă. Анчах çав плана тунă чухне партипе правительство постановленийĕпе усă курман. Çавăнпа та планра çитменлĕхсем нумай. Ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарассине палăртман. Колхоз тăваттăмĕш кун ĕнтĕ ыраш вырать. Анчах ĕç хăвăртлăхĕсем çителĕксĕр. Колхозăн ĕçе юрăхлă икĕ жнейка пур, вĕсемпе усă курмаççĕ. Авăн çапма та хатĕрленсе çитмен. Транспорт бригади, столовăй, ача ясли организацилесси çинчен сăмах та хускатман.

Колхоз председателĕ каланă тăрăх, колхозăн туртăм вăйĕ çителĕксĕр. Апла пулин те, унта ытти майсемпе усă курма шутламаççĕ. Фермăри 4 хĕсĕр ĕнене тата вăкăра кӳлме вĕрентмен.

Çавăн пекех юнашарти «Красный Октябрь» колхозра та тырпулсене пуçтарса кĕрес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Унта та партипе правительство постановленине ăнлантарса паман, жнейкăсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени — колхозсен ĕç программи пулса тăрать. Вăл постановление çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн постановлени мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслес ĕçе вăйлатмалла.

Т. ИВАНОВ.

„Килте ларма чун чăтмасть"

МУРКАШ. (Телефонпа). Атапайри «Крестьянин» колхозра ыраш вырма тухрĕç. Çак ĕçе кунта пурĕ 75 çын хутшăннă. Тырă вырассине уйрăм сдельщинăпа организациленĕ май, ĕçĕн тухăçлăхĕ пысăк. 15 çулхи К. Кожевников ĕç нормине кашни кунах 190 процент тултарать. 2-мĕш бригадăри 70 çулти колхозница М. Вязова тата А. Белорусова нормăна 106—110 процент тултараççĕ. 75 çулти Ф. Саратова тырă вырма никам чĕнмесĕрех тухнă, вăл çапла калать.

— Манăн 5 ывăлăм фронтра нимĕç вăрăхурахĕсене хирĕç çапăçаççĕ, эпĕ ватă, анчах килте алă усса ларма чунăм чăтмасть. Хамăн ывăлăмсене — Хĕрлĕ Çара— мĕнле те пулин пулăшас килет. Çавăнпа та тырă вырма хавасланса тухатăп.

Саратова юлташ кашни кунах нормăна ытлашшипех тултарса пырать.

Колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй ĕçлет, ачасен ясли те ĕçлеме тытăнчĕ.

Ялти çамрăксене вĕренме кăсхи шкулсем уçăлаççĕ

Пысăк ялсемпе колхозсенче тата МТС-сенче кăçалхи ноябрь уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ялти çамрăксемпе çул çитмен яш-кĕрĕме ялхуçалăх ĕçĕсенчен хăтармасăр вĕрентме каçхи шкулсем уçăлаççĕ.

Çак шкулсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ. Пĕрисем—пуçламăш шкулсем, теприсем — çичĕ çул вĕренмелли шкулсем.

Çак шкулсене вĕренме кĕрес тесе пакан çынсене ... ноябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче илеççĕ. (ТАСС).

ВАТĂ КОЛХОЗНИКСЕН ХАСТАРЛĂХĔ

ÇĔРПӲ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем тăшмана тĕппипех аркатса тăкас куна хăвăртрах çывхартас шухăш-кăмăлпа колхоз уйхирĕсенче вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Пуринчен ытларах ватă колхозниксем пикенсе ĕçленине палăртмалла.

Çакна пире «Новая жизнь» колхозри колхозниксен ĕçĕ те лайăххăн çирĕплетсе парать. Кунта тырра уйрăм участоксене пайласа выраççĕ. Çапла вара кашни участок çинче выраканах хăйĕн участокне ыттисенчен маларах тата тĕплĕнрех вырса пĕтерессишĕн ăмăртать, ирхине иртерех ĕçе тухса тĕттĕм пулса çитиччен пикенсе ĕçлет, хăйĕн канăвне те кĕскетет.

Акă 63 çулхи А. Черняевăпа 62 çулхи В. Мясцова колхозницăсем иккĕшĕ 4 кун хушшинче хăйсен участокĕ çинче 0,86 гектар, Е. Емаковăпа А. Имохина колхозницăсем 1,26 гектар вырнă. А. Мясцова, В. Сторублева, А. Баранова тата Ванюхина колхозницăсем те хăйсен участокĕ çинче ыттисемпе ăмăртса ĕçлеççĕ. «Красная Армия» колхозра 54 çулхи Е. Ефимова, колхозница кунсерен 0,10 гектар вырас вырăнне 0,21 гектар вырать. Кун пек тĕслĕхсем татах та пур.

Ытти колхозсенче те тырпул пухса кĕртес ĕç хĕрӳллĕн пулса пырать. Чылай çĕрте тырра машинăсемпе выраççĕ. Сăмахран, Ринга ялсоветĕнчи колхозсенче 140 гектартан 70 гектарне машинăпа вырнă. Çавăн пекех Иваново, Вĕрмер, Анат-Кипекçи тата Çĕн сала ялсоветĕнчи колхозсем те уборкăра ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Малта пыракан колхозсем авăн çапас, кĕлте кӳрес тата государствăна тырă парас ĕçсене пĕр вăхăтрах туса пыраççĕ. «Новая сила» колхоз çĕнĕ тырра 3.976 килограмм, «Красная Армия» колхоз 975 килограмм, «Коснария» колхоз 1.679 килограмм леçнĕ. Августăн 2-мĕшĕ тĕлне районĕпе государствăна 10 тонна тырă леçнĕ.

Эпир хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче уйхирте агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатрăмăр. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине ăнлантарса парас тата Вăрнарсен чĕнĕвне сӳтсе-явас майпа 76 колхоза партипе совет активне янă. Кунсăр пуçне, кашни бригадăрах хăйсен агитаторĕсем пур. Вĕсем колхозниксемпе пĕрле ĕçленĕ çĕрте, каннă вăхăтсенче ăнлантарулла ĕçе туса пыраççĕ, боевой листоксем кăлараççĕ.

Б. АВКСЕНТЬЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхозри ватă çынсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Сергей Дмитриевич Парамонов юлташ 60 çулта, анчах та вăл пĕр ĕçрен те юлмасть, çур çул хушшинче 161 ĕçкунĕ тунă. 66 çулти В. Лексин — 144 ĕçкунĕ, 67 çулти В. Дмитриев 155 ĕçкунĕ тунă. Уйхир ĕçĕнчен пушă вăхăтра вĕсем ут таврашĕсене, урапа-çунасене юсаççĕ тата колхозри ытти ĕçсене тăваççĕ. Тырă вырнă çĕрте вĕсем çĕмел-суратсем тăваççĕ.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Республикăри ĕççыннисем Сталин юлташа „Çĕнтерӳ" орденĕпе наградăланине савăнăçлăн кĕтсе илчĕç

Сталин—пирĕн çĕнтерӳсен ялавĕ

МУРКАШ, августăн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Совет Союзĕн Маршалне Сталин юлташа «Çĕнтерӳ» орденĕпе наградăласси çинчен кăларнă Указа пичетленĕ хаçатсене илсенех, агитаторсемпе пропагандистсем тата вулавçăсем колхозсенче, предприятисемпе учрежденисенче каласусем ирттерчĕç. Районри колхоз председателĕсен канашлăвĕнче Сталин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Квасов юлташ каласа пачĕ. Ун хыççăн «Броневик» колхоз председателĕ Матвеев юлташ сăмах илчĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çапла каларĕ:

— Сталин юлташа «Çĕнтерӳ» орденĕпе наградăлани Совет Союзĕнчи халăхсен шухăш-кăмăлĕсене палăртса парать. Сталин ертсе пынипе эпир социализмлă общество тума пултартăмăр, Сталин ертсе пынипе пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене хамăрăн таса çĕр çинчен шăлса ывăтать. Сталин — пирĕн çĕнтерӳсен ялавĕ. Сталин юлташа «Çĕнтерӳ» орденĕпе наградăланине çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе саламлас кăмăлпа эпĕ, колхозниксен ячĕпе, тырпулсене кĕске срокра пуçтарса кĕртетпĕр, кĕрхи акине августăн 20-мĕшĕччен вĕçлетпĕр, тесе çирĕп сăмах паратăп.

Çак сăмахсене колхоз председателĕсем пурте ырласа кĕтсе илчĕç.

Районри нумай колхозсенче Сталин юлташа «Çĕнтерӳ» орденĕ пани çинчен пĕлсен ĕçре çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

Столицăри ĕççыннисен сăмахĕ

Шупашкар хулинчи ĕççыннисем Сталин юлташа «Çĕнтерӳ» орденĕ пани çинчен пĕлтернине тулли кăмăлпа ырлаççĕ. Предприятисемпе учрежденисенче пулса иртекен каласусенче нумай рабочисемпе служащисем пирĕн çĕнтерӳсен организаторне, халăхсен çулпуçне—Сталин юлташа ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе саламлама пулаççĕ.

Пĕр заводра пулса иртнĕ каласура стахановец-прессовщик Николай Быстров, мухтавлă Хĕрлĕ Çар Сталин юлташ ертсе пынипе чаплă çĕнтерӳсем тунине палăртса, Хĕрлĕ Çара вăрçă техники ытларах парассишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеме сăмах панă.

Сталин юлташа «Çĕнтерӳ» орденĕ парса наградăланă ятпа «Кожупряжь» артельте тата ытти предприятисемпе учрежденисенче те каласусем пулса иртеççĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Канашри вагонсем юсакан заводри уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерсемпе техниксене тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри Сталинла Кунне палăртас майпа, производство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Канашри вагонсем юсакан заводри уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерсемпе техниксене тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Александр Константинович **Агафонова** — план отделĕн начальникне.
2. Александр Архипович **Архипова** — газосварщика.
3. Анна Андреевна **Бадановăна** — сверловщицăна.
4. Павел Иванович **Борисова** — токаре.
5. Серафима Ефимовна **Борисовăна** — комплектовщицăна.
6. Екатерина Васильевна **Будкинăна** — токаре.
7. Анна Егоровна **Гладковăна** — сверловщицăна.
8. Василий Потапович **Евтухова** — слесаре.
9. Наталия Егоровна **Егоровăна** — токаре.
10. Григорий Миронович **Жебрака**—цех начальникне.
11. Лев Лаврентьевич **Иванюка** — слесарьсен бригадирне.
12. Василий Пантелеймонович **Колокольнова** — цех начальникне.
13. Михаил Максимович **Крупенкăна** — литейщика.
14. Алексей Матвеевич **Лашманова** — тимĕрçе.
15. Георгий Ефимович **Лукина** — главнăй диспетчера.
16. Сергей Михайлович **Матвеева** — слесаре.
17. Маркел Дмитриевич **Мироненкăна**—слесарьсен бригадирне.
18. Николай Григорьевич **Миронова** — рабочисене снабжени парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен начальникăн заместительне.
19. Семен Моисеевич **Моисеенкăна** — электросварщика.
20. Прасковья Петровна **Монинăна** — çул çинчи рабочине.
21. Александр Емельянович **Монякова**—комплекслă бригадăн начальникне.
22. Мария Никоноровна **Никоноровăна**—станочницăна.
23. Михаил Николаевич **Никулина** — столяра.
24. Павел Гаврилович **Олейника** — токаре.
25. Игнатий Павлович **Охрименкăна** — строгальщика.
26. Николай Павлович **Павлова**—электромонтера.
27. Алексей Ефимович **Савенкăна** — цех начальникне.
28. Михаил Васильевич **Сокальские** — токаре.
29. Михаил Васильевич **Савастьянова** — спецотдел начальникне.
30. Фелла Марковна **Серовăна**—токаре.
31. Дмитрий Сазонович **Сытника**—тимĕрçе.
32. Николай Леонтьевич **Стасевича** — смена начальникне.
33. Михаил Петрович **Тимкина** — обрубщика.
34. Андрей Яковлевич **Яковлева** — станочника.
35. Василий Яковлевич **Яковлева**—топливо паракансен старши бригадирне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи июлĕн 29-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Улатăрти паровозсем юсакан заводри уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерсемпе техниксене тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри Сталинла Кунне палăртас майпа, производство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Улатăрти паровозсем юсакан заводри уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерсемпе техниксене тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Юрий Тихонович **Афонина** — токаре.
2. Александр Сергеевич **Бабакина**—котельщика.
3. Раиса Сергеевна **Балыкинăна** — токаре.
4. Михаил Николаевич **Бушева** — техникăллă контроль отделĕн начальникне.
5. Петр Иванович **Васюхина** — котельщика.
6. Петр Григорьевич **Верещагина**—техникăллă контроль отделĕн инспекторне.
7. Иосиф Васильевич **Гаврисюка**—трубовара.
8. Дмитрий Иванович **Горячева** — токаре.
9. Иван Игнатьевич **Грошева** — рессорщика.
10. Федор Иванович **Дашкова** — слесаре.
11. Федор Алексеевич **Догадина**—электросварщика.
12. Игорь Алексеевич **Егорова**—токаре.
13. Петр Васильевич **Жаренкова** — бухгалтера.
14. Александр Тихонович **Здюмаева** — мастера.
15. Виктор Константинович **Кабаевские**—старши мастера.
16. Петр Федорович **Киляшова** — слесаре.
17. Иван Яковлевич **Киреева**—мастера.
18. Михаил Агафонович **Комарова**—слесаре.
19. Алексей Герасимович **Кунина**—рессорщика.
20. Егор Иванович **Казакова** — модельщика.
21. Василий Федорович **Мигунова**—пескоструйщика.
22. Леонтий Яковлевич **Мондина** — токаре.
23. Константин Дмитриевич **Посошнова** — слесаре.
24. Александр Петрович **Райкина**—мастера.
25. Петр Данилович **Ренова** — слесарьразметчика.
26. Николай Петрович **Резчикова** — токаре.
27. Иван Васильевич **Рощина** — слесаре.
28. Федор Иванович **Туровские** — вагранщика.
29. Василий Сергеевич **Самойлова** — паровозсем çăвакана.
30. Аким Михайлович **Филянина** — слесаре.
31. Лев Григорьевич **Шерстюка**—ВКП(б) Улатăр хула комитечĕн секретарьне.
32. Петр Николаевич **Шестеркина** — слесаре.
33. Борис Сергеевич **Шереметьева** — электросварщика.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи июлĕн 29-мĕшĕ.

Çĕнĕ вĕренÿ çулне большевикла хатĕрленер

Совет шкулĕ Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш вĕренÿ çулне вĕçлерĕ. Иртнĕ вĕренÿ çулĕ совет шкулĕн пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулнипе палăрса тăрать. Партипе правительство шкул ыйтăвĕпе йышăннă решенисем — арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăммăн вĕрентмелле туни, вĕренÿре ăмăртăва пăрахăçа кăларни, пĕлÿ пахалăхне цифрăсемпе хакламалла туни тата атестатсем илме экзамен памалла туни, — çаксем пурте шкулсен ĕçне çĕклеме, вĕренÿпе воспитани ĕçне лайăхлатма, çамрăк ăрăва Сталин тапхăрне тивĕçлĕ пек пăхса ÿстерме лайăх майсемпе условисем туса параççĕ. Партипе правительство решенийĕсене тĕрĕс ăнланса илсе, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн кĕрешнĕ çĕрте сахал мар çитĕнÿсем тунă.

Шкулсемпе çутĕç органĕсен ĕçĕнчи тĕп ыйтусенчен пĕри вăл — пурне те вĕрентмелли закона пурнăçа кĕртесси пулать. Вĕренÿ çулĕн пуçламăшĕнче пурне те вĕрентмелли закона Елчĕк, Çĕрпÿ, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр тата ытти чылай районсем ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Шăмăршă, Пăрачкав, Улатăр, Сĕнтĕрвăрри тата ытти хăшпĕр районсем юлса пынă. Пурне те вĕрентмелли закона ăнăçлăн пурнăçа кĕртменни пĕтĕмпех райсовет исполкомĕсемпе çутĕç органĕсем, шкул директорĕсем вăхăтра кирлĕ мерăсем йышăнманнинчен килнĕ. Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ те хăйĕн вырăнти органĕсенчен закона тивĕçлипе пурнăçлама çирĕппĕн ыйтайман, вĕсен ĕçне тĕплĕн тĕрĕслесе пыман.

Шкула явăçтарнă ачасене пурне те вĕренÿ çулĕ вĕçлениччен вĕрентессине вĕренме условисемпе майсем туса пани татса парать. Ку тĕлĕшпе нумай районсенче начар мар ĕçленĕ. Елчĕк районĕнче пуçламĕш шкулсенчен пурĕ те 5 ача çеç вĕренме пăрахнă. Районри шкулсем 1943 çулхи çуракинчех хăйсем валли апат-çимĕç хатĕрлесе хăварнă. Кĕркунне вара 37 шкулта вĕри апат организациленĕ. Ĕçсыннисем тунă фондран 271 ачана тумтирсем, 384 ачана атă-пушмаксем тата чылай ачасене апат-çимĕçсем, укçа парса пулăшнă. Çаксем вĕсем вĕренме пăрахакансен хисепне чакарма май панă. Вăрмар, Советски тата ытти районсем те çавăн пекех лайăх ĕçленĕ.

Канаш, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Кувакино, Улатăр, Шăмăршă районĕсенче пачах урăхла вара. Канаш районĕнчи çутĕç пайĕнче ĕçленĕ çынсем шкулсем валли апат-çимĕç хатĕрлес, шкул ачисем валли вĕренме условисем туса парас ĕçе тивĕçлипе хакламан. Çавна пула унта вĕренÿ çулĕн тапхăрĕнче 265 ача вĕренме пăрахнă. Кунта асăннă ытти районсенче те çавăн евĕрлех пулнă.

Халĕ, çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленнĕ тапхăрта, çутĕç органĕсемпе шкулсен руководителĕсен, иртнĕ вĕренÿ çулĕнче пулнă çитменлĕхсене тĕплĕн шута илсе, вĕсене тимлĕн пĕтерсе пымалла. Пурне те вĕрентес закона пурнăçа кĕртме, чи малтан, шкул çулне çитнĕ ачасене тĕрĕс шута илес ĕçрен тытăнмалла. Унтан вара ачасене вĕренĕве явăçтарма, вĕсем валли вĕренме кирлĕ условисемпе майсене туса хатĕрлемелле.

Шкулсенчи çуркуннехи пĕлÿ тĕрĕслевĕсем çакна кăтартса пачĕç: çутĕç работникĕсем партипе правительство шкул ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе йышăннă решенисене тĕрĕс ăнланса илнĕ, вĕсем çамрăк ăрăва çирĕп пĕлÿпе лайăх воспитани парассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Арçын ачасен Шупашкарти пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче географи вĕрентекен учительница Ляшко юлташ пĕтĕм вĕренÿ çулĕнче хăйĕн ĕçĕсене кăтартуллăн организацилесе пынă. Вăл вĕренÿ материалĕсене хальхи тапхăрти лару-тăрупа çыхăнтарнă. Вĕренекенсен географи кружокне организациленĕ. Пĕлÿ тĕрĕслевĕнче вăл вĕрентнĕ ачасем лайăх паллăсем илнĕ. Сăмахран, 9-мĕш класра 16 ача тĕрĕслÿре пулнă пулсан, вĕсем хушшинче двойка илнисем пачах та пулман.

Шкул руководителĕсем те вĕренÿпе воспитани ĕçне ертсе пырассине чылаях лайăхлатрĕç. Красноармейски районри Именкассинчи вăтам шкулăн вĕренÿ пайĕн заведующийĕ Полякова юлташ, учительсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăнипе пĕрлех, вĕсене ĕçлĕ пулăшу парать. Вăл хăйĕн педагогика пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе те çине тăрса ĕçлет. Полякова ĕçлекен шкулта класри журналсене вăхăтра тата тĕрĕс тăваççĕ. Полякова пек ĕçлекенсем пирĕн республикăра сахал мар. Вĕсен ĕçĕ пĕтĕм учительсемшĕн пример пулса тăрать.

Республикăри шкулсем хăйсен ĕçне çĕнĕлле организацилес тĕлĕшпе тимлĕн тăрăшаççĕ. Анчах та шкулсен пĕтĕм ĕçне партипе правительство хушнă пек йĕркеленĕ теме çук-ха. Тунă çитĕнÿсем малтанхи утăмсем кăна пулаççĕ-ха. Çитес вĕренÿ çулĕнче совет шкулĕ умĕнче тата та пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Çав ответлă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен, вĕренÿ çулне хатĕрленнĕ тапхăрта мĕнпур çитменлĕхсене пĕтермелле, шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне кăтартуллăн хатĕрлемелле.

Республикăра çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсене пурнăçа кĕртнĕ ĕнтĕ. 1944—45-мĕш вĕренÿ çулĕнче шкула илмелли ачасене малтанласа шута илсе тухнă. Нумай шкулсен коллективĕсем вутă хатĕрлеме тытăннă. Çавăн пекех учебниксем сутăн илес, шкул çурчĕсемпе вĕренÿ хатĕрĕсене юсас ĕç те пулса пырать. Анчах та ĕç хăвăртлăхĕсем çителĕклĕ теме çук. Ишлей, Çĕрпÿ, Етĕрне, Çĕмĕрле тата ытти районсенче шкулсем валли вутă хатĕрлеме тытăнман. Вĕренÿре кирлĕ хатĕрсене хатĕрлес ĕç çителĕксĕр пырать. Чăваш АССР Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕпе промысла коопераци Управленийĕ вĕренÿре кирлĕ чылай хатĕрсене халĕ те тума тытăнман-ха. Чылай шкулсенче çуртсене юсасси сÿрĕк пырать.

Вĕренÿ çулĕ пуçланиччен вăхăт нумай юлмарĕ. Çак кĕске вăхăт хушшинче пур шкулсене те вĕренÿ çулне тĕплĕн хатĕрлес тесе халех татăклă мерăсем йышăнмалла. Çутĕç работникĕсен нумаях пулмасть пулса иртнĕ республикăри канашлăвĕ пĕтĕм республикăри учительсене вĕренÿ çулне пур тĕлĕшпе те тĕплĕн хатĕрленме, çапла вара çамрăк ăрăва çирĕп пĕлÿпе лайăх воспитани пама мĕн кирлисене пĕтĕмпех хатĕрлесе çитерме чĕнсе каларĕ. Çутĕç работникĕсен, шкул директорĕсен тата учительсен кулленхи тивĕçĕ — шкулсене вĕренÿ çулне тĕплĕн хатĕрлессишĕн кĕрешесси пулать.

Вăхăта вăраха ямасăрах шкулсен çурчĕсене, вĕренÿ хатĕрĕсене юсаса çитермелле. Ку ĕçре шкул руководителĕсене комсомол тата пионер организацийĕсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Вĕсене ĕçе активлăн явăçтармалла. Шкул участокĕсенчи пахча-çимĕçсене лайăх пăхса ÿстерсе, хĕле валли апат-çимĕç хатĕрлемелле. Учебниксемпе нагляднăй пособисене хатĕрлес ĕç çине те тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Райçутĕç пайĕсен шкулсем вĕренÿ çулне мĕнле хатĕрленнине тăтăшах тĕрĕслемелле, куллен пулăшу парса пымалла.

Шкулсене вĕренÿ çулне хатĕрлес тĕлĕшпе партипе совет тата комсомол организацийĕсем çинче пысăк ответлăх тăрать. Вĕсен тивĕçĕ — çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçе ертсе пырасси, шкул директорĕсемпе учительсене кулленхи ĕçре пулăшасси, шкулсене вĕренÿ çулне хатĕрлес ĕçе ялти тата хулари общественноçа, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсене анлăн явăçтарасси пулать.

Районсенчи çутĕç пайĕсен шкулсен ĕçне тĕрĕслесе тăрассине тата вĕсене кулленхи ĕçре пулăшассине лайăхлатмалла. Ку ыйту халĕ уйрăмăнах çивĕччĕн тăрать. Мĕншĕн тесен Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче республикăри шкулсене çамрăк учительсем нумай пычĕç. Вĕсене партипе правительство решенийĕсене ăнланса илме пулăшмалла. Учительсене пулăшас майпа канашлусем, семинарсем, докладсемпе лекцисем иртермелле. Методика енĕпе пулăшас ĕçе çĕнетсе лайăхлатмалла. Учительсем заочно вĕренессине тивĕçлипе йĕркелес пулать.

Республикăри шкулсене вĕренÿ çулне пур тĕлĕшпе те кăтартуллăн хатĕрлени çамрăк ăрăва воспитани парас ĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пулăшать.

Çутĕç работникĕсем тата партипе совет организацийĕсем тимлĕн тăрăшсан, пирĕн шкулсем çитес вĕренÿ çулĕнче те ăнăçлăн ĕçлеме, пысăк çитĕнÿсем тума пултарĕç.

М. МАКАРОВ,
Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ.

И. Е. Репин çуралнăранпа 100 çул тултарни

Пирĕн тăван çĕршыв вырăссен аслă художникĕ И. Е. Репин çуралнăранпа 100 çул тултарнине уявлать. Совет Союзĕн хулисенче нумайĕшĕнче чаплă ларусем пулса иртмелле, юбилей ячĕпе выставкăсем пулмалла.

Мускавра Репин картинисен выставки уçăлать. Çав картинăсен шутĕнче Репин ÿкернĕ Лев Толстой, Мусоргский, Писемский, Стрепетова, Гаршин, Стасов, Максим Горький тата вырăссен ытти чаплă çынисен сăнĕсене кăтартаççĕ. Тăван çĕршыв столицинче юбилей кунĕсенче научнăй сесси пулса иртет. Çав сессире çакăн пек докладсем пулаççĕ: «Репин тата вырăссен художествăллă культури», —ку доклада Игорь Грабарь тăвать, «Репин картинисемпе совет художникĕсен задачисем», — ку доклада А. Замошкин тăвать, «Репин тата вырăс живописĕн шкулĕ —доклад тăваканĕ А. Михайлов.

Третьяковски галлерея кусса çÿрекен выставкăсем организациленĕ. Çав выставкăсем валли хатĕрленĕ картинăсенчен 50-шне тĕрлĕрен сăрпа ÿкернĕ. Çав выставкăсенчен пĕрне Репин çуралса ÿснĕ Чугуев хулине янă.

Мускавра чаплă лару пулать. Унсăр пуçне тата вечерсем пулса иртеççĕ. Вечерсенче гениллĕ живописецăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен докладсем туса параççĕ. Çавăн пек вечерсем Сталин ячĕпе тăракан автозаводăн культура çуртĕнче, Хĕрлĕ Çарăн Центральнăй Çуртĕнче, НКВД-ăн Центральнăй клубĕнче, художествăна вĕрентекен шкулсенче тата ытти вырăнсенче те пулаççĕ.

«Искусство» издательстви Репинăн «Çывăхри—инçетри» ятлă кĕнекине пичетлесе кăларнă. Çав кĕнекере художник хăйĕн ача чухнехипе çамрăк чухнехи кунĕсем çинчен, Художество Академийĕнче ĕçленĕ чухнехи вăхăт çинчен каласа кăтартнă. Ку кĕнекери чылай пайсенче вырăссен паллă художникĕсем Крамской, Ге, Куинджи, Серов, Максимов çинчен, Гаршин писатель çинчен аса илнисене пичетленĕ, Лев Толстойпа тĕл пулнисем çинчен каласа кăтартнă. Çак кĕнекерех Репин искусство çинчен çырнă вунă çырăва кĕритĕ. Кĕнекен эпиграфĕнче художник Пушкинăн «Борис Годунов» пьесинчи Пимен летописецăн сăмахĕсене — «Ватлăхра эпĕ çĕнĕрен пурăнатăп, иртни тепĕр хут ман умра тăрать» тенине илсе пичетленĕ.

«Çывăхри—инçетри» малтанхи хут 1937 çулта пичетленсе тухнă. Нумаях пулмасть çав кĕнекен алçырăвĕнче автор аллипе тунă литературăллă тата ытти тÿрлетÿсем 700 тÿрлетÿ пулнă. Çав тÿрлетÿсене çĕнĕ издание пурне те кĕртнĕ. Репинăн литературăри тепĕр ĕçне те — «Атăл çинчи бурлаксем» ятлă кĕнекине тепĕр хут пичетлесе кăларнă. Çав кĕнекене художник хăй Атăл тăрăх çÿрени çинчен тата хăйĕн çав ятлă картинине ÿкернĕ чухне мĕнле ĕçлени çинчен калакан очерксене пĕрле пухса кĕртнĕ. Ку кĕнекере 67 иллюстраци малтанхи хут пичетленсе тухаççĕ. Çав иллюстрацисем — çул çинче тунă ÿкерчĕксем, картина валли тунă этюдсем. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ августăн 2-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Авранш хули секторĕнче союзниксен бронетанковăй вăйĕсем çаплах малалла куçса пынă. Вильдье хулинчен кăнтăрталарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. Тăшман хаяррăн хирĕç тăнă, пулин те пирĕн çарсем Тесси хулине туртса илнĕ.

Авиаци чугун çул узелĕсене, складсене тата тăшманăн ытти объекчĕсене те тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, августăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ августăн 2-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсен соединенийĕсем кунĕпех наступлени туса пынă, вĕсем Вир шывĕ çине тухнă та Вир хулинчен Конде хули патнелле каякан çул патне çитнĕ. Пирĕн çарсем Эстри ялне туртса илнĕ. Наступлени малалла пырать. Пирĕн çарсем Онэ патне çывхарса çитеççĕ. Кан хули секторĕнче пирĕн çарсем тăшманăн бронетанковăй соединенийĕсемпе хаяррăн çапăçаççĕ. Хĕвеланăç секторĕнче союзниксен çарĕсен бронетанковăй соединенийĕсем, Понторсонран иртсе кайса, малалла куçнă, ытти чаççем Сен-Пуа патне çывхарса пыраççĕ, вĕсем Брецейран кăнтăр-хĕвелтухăçнелле куçнă. Пирĕн çарсем Вильдье хулине туртса илнĕ те халĕ Ториньирен кăнтăралла тапăнса пыраççĕ. Çанталăк начар тăнине пула сывлăшра вăйлă çапăçусемех пулман.

* * *

ЛОНДОН, августăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ августăн 3-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Августăн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтра паллă улшăнусемех пулман. Бреçсейран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри Ле-Менильре тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Çапăçусем Перси хулинчен кăнтăрарахра тата Виллер-Бокажпа Онэ таврашĕнче пыраççĕ. Понторсонран иртсе кайнă чаççем çаплах малалла куçаççĕ.

Союзниксен авиацийĕ Бельгирен пуçласа Бискай заливĕ патне çитиччен районра кĕперсене, танксене, боеприпаспа горючи склачĕсене, тăшманăн транспорчĕпе суднисене тапăннă. Вăтам бомбардировщиксем тăшманăн Францири объекчĕсене ăнăçлăн тапăннă.

Союзниксен çарĕсем Ренн хулине йышăнса илнĕ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). США çар министрĕ Стимсон паян пресс-конференцире çапла каланă: союзниксен çарĕсем Çурçĕр Францин Ильпе Вилен департаментĕнчи Ренн хулине йышăнса илнĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Монтелупо хулинчен кăнтăртарахра Инди дивизийĕн чаçĕсем Пеза шывĕ урлă анлă фронтпа каçнă та пĕр миля ытла малалла куçнă.

Флоренци хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре малтанхи пекех йывăр çапăçусем пыраççĕ. Флоренци хулинчен кăнтăртарахра Греве шывĕн улăхĕнче, тăшман вăйлă хирĕç тăнă пулин те, пирĕн çарсем самаях пысăк çитĕнÿсем тунă.

Арно шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче, Флоренци хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, союзниксен çарĕсем тĕллĕн-тĕллĕн малалла куçнă. Акăлчансен 8-мĕш арми фрончĕн тата американецсен 5-мĕш арми фрончĕн ытти участокĕсенче патрульсем кĕрешнĕ тата тăшмана хирĕç артиллери персе тăнă.

Союзниксен авиацийĕ Кăнтăр Францире тăшманăн çулйĕрĕсене, торпеда заводне тата ытти вăрçă объекчĕсене тапăннă, çавăн пекех тата Генуя портĕнчи сооруженисем çине бомбăсем пăрахнă.

Союзниксен авиацийĕ çавăн пекех тата Югослави çинче те çапăçнă.

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, августăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Великобританин премьер-министрĕ Уинстон Черчилль общинăсен палатинче пысăк сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл вăрçă лару-тăрăвне тĕплĕн çутатса панă.

КĔСКЕН

● Уругвай правительстви хăй çĕршывĕн мĕнпур порчĕсене лайăхрах сыхлас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем тума йышăннă. Мĕншĕн тесен юлашки вăхăтра Аргентина майлă ĕçлекен фашистсем Уругвай правительствипе США-на хирĕçле кампание вăйлатса янă.

● Çитес 5—10 çул хушшинче Америка çĕнĕрен 3.000 аэропорт тума тата хальхисенчен 1.625 аэропорта лайăхлатма шутлать. Хальхи вăхăтра США-ра 3.086 порт шутланать. Халь США-ра сывлăшри транспортпа 286 хула усă кураççĕ, çĕнĕ аэропортсем тусан, сывлăшри транспортпа усă куракан хуласен шучĕ 1.827 çитет (ТАСС).

ХРОНИКА

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Николай Александрович Булганин юлташа Польша халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет çумĕнче Совет Правительствин представителĕ пулса ĕçлеме лартнă.

* * *

Польша халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет Винцент Ржимовские СССР Правительстви çумĕнче хăйĕн представителĕ пулса ĕçлеме лартнă.

Вырăс халăхĕн аслă художникĕ

(И. Е. Репин çуралнăранпа 100 çул тултарнă май)

Илья Ефимович Репин хăй пурăннă чухнех пĕтĕм тĕнчешĕн паллă пулса тăнă. Анчах унăн ятне ниçта та, нихăçан та пирĕн çĕршыври пек çав тери юратса асăнман. Унăн чăн-чăн халăх творчестви пулса тăракан ĕçĕсем совет çыннисемшĕн хаклă та çывăх. Эпир унăн пурнăçа кăтартса паракан реалистла искусствине пысăка хурса хаклатпăр.

Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 24 çул тултарни çинчен тунă докладра аслă вырăс халăхĕн чаплă çыннисен ячĕсемпе пĕрле Репин ятне те асăннă. Репин чăннипех те реализм ялавне, гуманизмпа демократиллĕ идейăсен ялавне çÿлте çĕклесе пыракан вырăссен аслă искусствин мухтавлă деятелĕсен ретĕнче тăма тивĕçлĕ. Эпир аслă художникăн ятне вырăссен аслă живописецĕ В. И. Суриков ячĕпе пĕрле, Толстой, Чехов, Мусоргский тата Чайковский ячĕсемпе пĕрле асăнатпăр. Вĕсенчен кашни хăй искусствин вăйне ирĕклĕхпе тĕрĕслĕхшĕн кĕрешнĕ çĕре панă.

* * *

«Кирек мĕнле самана искусствинче те эпир икĕ тĕрлĕ генисем пуррине куратпăр,— тесе çырнă Репин хăйĕн пĕр статьинче.— Пĕр йышши гени вăл — новатор, искусствăн çĕнĕ тапхăрне пуçараканĕ; унăн изобретателе тивĕçлĕ пахалăхсем пур тата ăна чылай чухне йышăнмасăр хăвараççĕ. Çавăн пек çын хăй тĕллĕн пурăнма юрататъ, вăл енчен енне ывтăнать. Вăл çĕнĕ тапхăр уçать. Тепĕр йышши гени— пур енĕпе те усă курнă тĕллеве вĕçлекенни. Ун пек çын пĕтĕмпех пĕлме, хăйĕн искусствипе хăй пурăннă тапхăра мĕнпур талккишĕпех кăтартса пама пултарать. Ана хаклама çăмăл, унăн сăнарĕ — уçăмлă».

Кунта мухтанма юратмен тата хăйĕн творчествипе нихăçан та лăпланман Илья Ефимович хăй çинчен каламан. Анчах вăл çÿлте тĕплĕн кăтартса панă «иккĕмĕш йышши гени» ретĕнче пулни пирки иккеленмелли çук. Вăл вырăс искусствинче иртнĕ ĕмĕрхи 60-мĕш çулсенче демократиллĕ художниксем пуçарнă, 70-мĕш çулсенче художник-передвижниксем малалла аталантарнă ĕçсене вĕçлекенни пулнă. Репин творчестви — вырăс живописĕнчи реализмлă искусствăн чи çÿллĕ пусăмĕ пулса тăрать. Ана Горький критикăллă реализм тесе хакланă.

Художник хăй искусствин уйрăмлăхĕсене ăнлантарса панă чухне хăй демократиллĕ сийрен тухнине темиçе хут та палăртнă. Вăл хăйне иртнĕ ĕмĕрхи «60-мĕш çулсенчи çын» пулнине, çапла вара хăй çав çулсенчи малта пыракан çынсенчен вĕреннине палăртма юратнă. Репин хăйне пурнăç çине тĕрĕс пăхма, искусствăна ăнланса илме вĕрентекен учительсем тесе Белинские, Чернышевские, Добролюбова шутланă.

Илья Ефимович художник пулса ÿснĕ тапхăр малта пыракан çамрăксем искусствăра Белинскипе Чернышевский кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн, нациллĕ çĕнĕ искусствăшăн, халăх ĕçĕшĕн тăракан тата халăх интересĕсене сыхлакан искусствăшăн, анлă массăсем ăнланакан тата вĕсемшĕн çывăх тăракан искусствăшăн кĕрешÿ пуçарнипе паллă пулса тăрать. Малашне демократиллĕ художниксем куçса çÿрекен художествăллă выставкăсен ушкăнне пĕрлешнĕ. Вăл пĕрлешÿ вырăссен нациллĕ искусствине аталантарас ĕçре паллă вырăн йышăнса тăнă. Репин художествăллă академирен вĕренсе тухнă хыççăнах çав пĕрлешĕве хутшăннă. Илья Ефимович хăйсен организаторĕпе тата çулпуçĕпе — Крамской художникпа хăй вĕреннĕ çулсенчех туслашнă.

Куçса çÿрекен выставкăсен пĕрлешĕвĕ аталаннă çулсем (иртнĕ ĕмĕрхи 70-мĕшпе 80-мĕш çулсем) Репин таланчĕ чечекленнĕ çулсемпе çыхăнса тăраççĕ. Художниксен пĕрлĕшĕвĕ хăй умне лартнă задачăсене Илья Ефимович тимлĕн пурнăçа кĕртсе пынă.

* * *

Илья Ефимович Репин 1881 çулта хăйĕн тусĕ С. С. Стасов критик патне янă çырура хăй ырă та тĕрĕс тата илемлĕ пурнăçа, уйрăмăнах ирĕклĕхшĕн, чуралăхпа эксплоатацине хирĕç пыракан кĕрешÿпе çунса тăракан пурнăçа юратни çинчен çырнă. Художникăн творчестви çав сăмахсене уçăмлăн çирĕплетсе парать. Унăн искусстви хăй пурăннă вăхăтри обществăллă пурнăçăн тĕксĕм енĕсене уçса палăртнă.

Репин, хăй каланă тăрăх, чĕрĕ пурнăç тĕрĕслĕхне кăтартса пама, «пирĕншĕн ăнланмалла, пире иртнĕ событисенчен пуринчен те ытларах хумхантаракан» паянхи йĕрри-таврари пурнăçран илнĕ картинăсем çырма тăрăшнă. Чăнах та вăл хăйĕн произведенийĕсенче хăй пурăннă тапхăрти малта пыракан çынсене интереслентерекен ыйтусене никамран та ытларах тивĕçтерсе пынă.

Репин хăйĕн «Атăл çинчи бурлаксем» ятлă чаплă картинине художествăллă академире вĕреннĕ чухне çырма пуçланă. Ана вăл 1873 çулта çырса пĕтернĕ. Çав картинăна çырас тесе художник икĕ çул хушши Атăл тăрăхĕнче пурăнса иртернĕ. Вăл аслă шыв тăрăхĕнчи çут çанталăк çинчен, хуласем, уйрăмăнах Чулхула çинчен хавасланса каласа кăтартнă. Атăл тăрăхĕнчи çынсем ăна пуринчен те ытларах хаваслантарнă. «Çав тери илемлĕ те патмар халăх...» тенĕ вăл. Каярахпа Репин хăйĕн Атăл тăрăхĕнче пурăннă вăхăтри ĕçĕсене художникăн чăн-чăн «шкулĕ» тесе хакланă.

Илья Ефимович Репин 1876 çулта ют çĕршывсенчен таврăннă хыççăн «Крестный ход в Курской губернии» (1883 çул) ятлă картинăна çырас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме тытăннă. Çав картина вырăс халăхĕн пурнăçне çутатса парать. Çав картинăра хĕвел çути айĕнче тусанлă çулпа «икона хыççăн» пыракан çынсен пысăк ушкăнне ÿкернĕ. Чăннипе илсен, художник çав картинăра Россия провинцийĕн реформа тапхăрĕнчи пурнăçне кăтартса панă.

Репин, хăй пурăннă тапхăрти пурнăçăн тĕксĕм енĕсене кăтартса парса, обществăллă строя критикленипе пĕрлех, пулас лайăх пурнăçшăн кĕрешекенсемпе те интересленнĕ. Вăл хăй пурăннă тапхăрти революциллĕ интеллигенцин сăнарĕсене çырса кăтартнă. Илья Ефимович вăрттăн ĕçлекен революционерсене — «Пуху» картинăра (1883 çул), «халăх хушшине кĕнĕ» тапхăра — «Ялти пропагандиста арестлени» картинăра (1878 çул), революционерсене каторгăна ăсатнине — «Конвой хÿтĕлесе пынипе» картинăра (1876 çул), суд тунă революционера вĕлернине — «Кĕл тума килĕшменни» картинăра (1882 çул), ссылкăна янă çын хăйĕн çемьине таврăннине — «Кĕтмен çĕртен» картинăра (1884 çул) кăтартса панă. Юлашки картинăра вăл, çемьери хумханулла тĕлпулăва кăтартса парса, пысăк темăна татса пама пултарнă. Çав картина, ытти картинăсем пекех, революциллĕ туйăма сарас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вырăс çыннисем, ăна курса, халăх телейлĕхĕшĕн кĕрешес туйăмпа хавхаланнă.

Генилле художник çынсене картинăсенче кăна мар, портретсенче те кăтартса панă. Илья Ефимович хăй пурăннă вăхăтри нумай çынсен портречĕсене çырса хăварнă. Вăл, хăй каланă тăрăх, чи малтанах, нацишĕн хаклă, халăхăн паллă ывăлĕсен, çĕршыва усă кÿрекен, малашлăха шанса тăракан тата телейлĕ малашлăхшăн кĕрешекен çынсен портречĕсене ÿкернĕ. Çапла, вăл паллă ученăйсен — Пироговпа Сеченовăн, Менделеевпа Павловăн, Мусоргскипе Бородин тата Римский-Корсаков композиторсен, Лев Толстой, Максим Горький, Гаршин писательсен, Суриков, Крамской, Серов художниксен тата ытти нумай çынсен портречĕсене çырнă.

Репин хăй вăхăтĕнчи пурнăçпа çынсене анлăн кăтартса панипе пĕрлех, вырăс халăхĕн историне кăтартса парас енĕпе те тимлĕн ĕçленĕ. Унăн историллĕ картинисенчен чылайĕшĕсем вырăс искусствин «ылттăн фондне» яланлăхах кĕрсе юлнă. Вĕсем хушшинче — «Иван Грозный тата унăн ывăлĕ Иван 1581 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче» (1885 çулта çырнă), «Запорожецсем» (1891 çулта çырнă) тата ытти картинăсем. Илья Ефимович каланă тăрăх, вăл запорожецсене, вĕсем ирĕклĕхпе пĕртанлăха тата туслăха никамран та ытларах юратнă пирки хакланă. Çав картинăн тĕп никĕсĕ — 1675 çулта Турци султанĕ Магомет IV запорожецсем патне хăйне пăхăнма хушса янă çыру çинчен калакан историллĕ халлап пулнă. Ирĕклĕхе юратакан запорожецсем султан патне хăюллă ответ янă. Çав çырăва пачах та дипломатиллĕ сăмахсемпе çырман. Художник çав картинăра запорожецсем, писарь патне пуханнăскерсем, пĕр туйăмпа ахăлтатса кулса, ответлă çыру çырнине кăтартса панă. Картинăра художникăн хĕрÿллĕ патриотизмĕ, вăл хăйĕн тăван халăхĕн иксĕлми вăйĕ çине чĕререн шанса тăни палăрать.

Репин хăй пурнăçĕн юлашки кунĕсенче çапла çырнă: «Вырăс çыннин чĕринче никамшăн та паллă мар уйрăм йышши паттăрлăх пур... Çавă вăл — пурнăçăн хăватлă вăйĕ, вăл сăрт-тусене куçарать; вăл аслă çĕнтерÿсем тăвать; вăл Бородино хирĕнчи çапăçăва ертсе пынă; вăл Минин хыççăн кайнă; вăл Смоленскпа Мускава çунтарса янă; вăлах ватă Кутузовăн чĕринче тапса тăнă»...

Çак сăмахсене нумай çулсем каярах çырнă. Апла пулин те, вăл сăмахсене эпир халĕ, вырăс халăхĕ Совет Союзĕнчи ытти тăванла халăхсен пуçĕнче тăрса, хăйĕн чыслăхĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн тата хамăрăн аслă тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн кĕрешнĕ вăхăтра, фашистла захватчиксене тăван çĕршывран хăваланă вăхăтра ,тулли кăмăлпа хавхаланса вулатпăр. Çав халăх Репина паха произведенисем çырма хаваслантарнă. Репин хăйĕн хăватлă творчествине пĕтĕмпех паттăр халăха халаланă. Халăх хăйĕн аслă художникне нихăçан та манмĕ.

С. ДРУЖИНИН.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 2-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех американецсен илемлĕ çĕнĕ фильмне

«СЕРЕНАДА СОЛНЕЧНОЙ ДОЛИНЫ»

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 10, 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Июлĕн 15-мĕшĕнче Улатăр леспромхозĕн 21-мĕш километрĕнче ăйăр çухалнă. Паллисем çаксем: 7 çулта, тĕсĕ тура. Çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Елчĕк районĕнчи Хăвăл Çырма ялсоветĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00620 Типографиа №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ №2 ф. 6, 59Х42 п. л. Тираж 16.000 экз.